# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

93-94 (7518-7519) №№ ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи ноябрĕн (чӳк) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Паян – Милици кунĕ

### ЙĔРКЕ ХУРАЛĔН ВЕТЕРАНĔСЕМПЕ ПАЯН СЛУЖБĂРА ТĂРАКАНСЕМ!

Сире профессиллĕ уявпа – Милици кунĕпе саламлатăп! Эсир çăмăл мар службăна тивĕçлĕ те шанчăклă алăра тытатăр, çĕршыври саккунлăхпа йĕркелĕхе çирĕп хураллатăр, граждансен прависемпе интересĕсене хӳтĕлетĕр. Йĕрке хуралĕн ĕçченĕсем час-часах пурнăçа шеллемесĕр хăюлăхпа паттăрлăх, тулли ăс-хакăлпа çирĕп вăй-хал кăтартса хăйсен тивĕçне пурнăçлаççĕ, кирлĕ лару-тăрура вырăнлă йышăнусем тăваççĕ.

Сирĕн ĕç-хĕл Чăваш Республикинче обществăлла политика тата социаллă экономика тăнăçлăхне тытса пырас çĕрте пысăк пĕлтерĕшлĕ. Юлашки çулсенче преступленисене уçса парасси ӳснине палăртма кăмăллă. Çавăнпа пĕрлех преступноç шайĕ чакни те куçа курăнать. Кунта право йĕркине пăснинчен асăрхаттарма профилактика ĕçне пĕлсе йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствинче ĕçлекенсем çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе пысăк тимлĕх уйăрни те йĕркелĕх çинче палăрать.

Республика мал туртăмлă аталанни право йĕркине сыхлакан органсен материалпа техника базине те çĕнетме-çирĕплетме пулăшать. Паян çĕнĕ автомобильсем, ятарлă оборудованипе техника туянма, çуртсем çĕнĕрен тума тата юсама сахал мар укçа-тенкĕ каять. Шанатăп, çак тимлĕх Сирĕн ĕç эффективлăхне, результативлăхне ӳстерĕ.

Хăвăр суйласа илнĕ ĕçре Эсир шанчăклă пулнишĕн, служба тивĕçне пурнăçланă чух паттăрлăх кăтартнăшăн тав тăватăп. Пурсăра та тата çывăх тăванăрсене те çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей, тивĕçлĕ пурнăç сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

### ХИСЕПЛĔ МИЛИЦИ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире Милици кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Служба тивĕçĕ сире хăюллă та хастар, çирĕп кăмăллă пулма хистет. Пĕтĕм ĕçе эсир пысăк яваплăхпа тăватăр: обществăлла йĕркелĕхе сыхлатăр, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕлетĕр. Хăвăр тивĕçĕрсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратăр. Нимĕнле йывăрлăха, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр, лăпкăлăхпа тăнăçлăха сыхлатăр. Эсир йĕркеллĕ те эффективлă ĕçлесе пынипе районта преступленисене уçасси ӳссех пырать. Тавах сире çăмăл мар, пархатарлă ĕçĕршĕн.

Право йĕркине сыхлакан органсенчи ветерансен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ калас килет. Эсир вара, çамрăк сотрудниксем, паян вĕсен опытне ăша хыватăр, ырă йăли-йĕркине малалла тăсатăр. Чăтăмлăх та, çивĕчлĕх те, хăвăр ĕçĕршĕн çунса тăни кирлĕ çакна валли. Эсир малашне те, çакна асра тытса, хăвăрăн професси тивĕçĕсене таса чун-чĕререн пурнăçласса шанас килет.

Сире, сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, ăнлану, телей сунатăп. Çемйĕрсенче лăпкăлăх хуçалантăр, çĕршывра тăнăçлăх пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**



**Милици тумĕ тăхăннă арçынсене курма хăнăхнă ĕнтĕ, çав тумлă хĕрсемпе хĕрарăмсене асăрхатăн та кăшт ăмсанмалла пек туйăнать, мĕншĕн тесен вĕсем пирĕн хушăра пит нумай мар-çке. Алина Валериановна Кириллова вара шалти ĕçсен пайĕнче 1993 çулхи июнĕн 8-мĕшĕнчепе тăрăшать. Çамрăклах вăл йĕрке хуралĕн ĕçне пикеннĕ. Тус-тантăшĕсен сăмахĕсем те ăна хăратман, чун юратнă ĕçрен пистермен. 2004 çултанпа штаб инспекторĕнче тăрăшать. Кунти ĕçе вăл алăри пилĕк пӳрне пекех вĕренсе çитнĕ. Халĕ вара çамрăк ĕçтешĕсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче Алина Валериановна. Унăн ĕçри пултарулăхĕпе тăрăшулăхне чылай Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсем çирĕплетеççĕ.**

## Цифрăсен чĕлхипе

# Ĕç укçи ӳсет

Темиçе çул каялла ĕç укçи ыйтăвĕ питĕ çивĕч пулнăччĕ. Унăн пĕчĕк виçи, çитменнине тата ăна вăхăтра илейменни чылайăшне пăшăрхантаратчĕ. Халĕ ĕнтĕ ку ыйту майĕпен йĕркеленчĕ темелле. Чăваш Ен – Мордвапа Мари Республикисене, Пензăпа Чĕмпĕр облаçĕсене хыçа хăварчĕ. Астăватăр ĕнтĕ, совет саманинче пирĕн республика вĕсенчен самай кайраччĕ. Халĕ вара Киров облаçĕ те пирĕнтен пĕр пусăм аяларах анчĕ, унта çурçĕр хушма тӳлев пур пулин те. Енчен те эпир малашне те çакăн пек хăвăртлăхпа пырсан, чылай мала ӳкĕпĕр, нефть промышленноçлă Чулхула облаçĕпе Тутарстан Республикине те хăваласа çитĕпĕр.

***Атăлçи федераллă округри регионсем хушшинче уйăхри вăтам ĕç укçи калăпăшĕпе камсем маларахра-ши?***

| | |
|---|---|
| Тутар Республики | 11696,2 тенкĕ |
| Чулхула облаçĕ | 10288,5 тенкĕ |
| Чăваш Республики | 9077,8 тенкĕ |
| Киров облаçĕ | 9047,5 тенкĕ |
| Пенза облаçĕ | 8874,0 тенкĕ |
| Мари Республики | 8475,6 тенкĕ |
| Чĕмпĕр облаçĕ | 8403,4 тенкĕ |
| Мордва Республики | 8242,6 тенкĕ |

## Пресс-конференци

# Вунă преступленирен улттăшне уçса панă

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ Вадим Валентинович Антонов генерал-майор Раççей милицийĕ йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнине халалласа пресс-конференци ирттерчĕ. Ĕçлĕ калаçу "тӳрĕ çыхăну" мелĕпе пулчĕ. Çакна хăйне май çĕнĕлĕх темелле. Пресс-конференцие тĕрлĕ районсенчи журналистсем те хутшăнчĕç, хăйсене тата ыттисене хумхантаракан ыйтусене хускатма пултарчĕç. Вĕсем çине вара В.В. Антонов çийĕнчех тивĕçлĕ хурав пачĕ.

"Çулталăк пуçланнăранпа вăхăт самаях иртрĕ. Çак тапхăрта шалти ĕçсен пайĕсен дежурнăй уйрăмĕсем 400 пин ытла тĕрлĕ пĕлтерӳ йышăннă. Пысăк калăпăшлă профилактика ĕçĕсене туса ирттерни те питĕ вырăнлă. Çавăн йышши 30 мероприятире административлă майпа йĕркене пăснă 217 пин тĕслĕх тупса палăртнă. Атăлçи федераллă округпа илес пулсан, преступленисене уçассипе эпир малтисен ретĕнче (иртнĕ çулхи кăтарту тăрăх). 10 преступленирен 6-шне уçма май тупатпăр". Çакă тата ытти кăтартусемпе паллаштарчĕ вăл. Çавăн пекех пресс-конференци ĕçне ЧР шалти ĕçсен министрĕн çумĕ, юстици полковникĕ, тĕп куратор Ю.В. Шаповалов хутшăнчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчи 506 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

**Антонина Владимировна КАРПОВАНА**, Муркаш райповĕнчи аслă повара, потребкооперацире нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн.

**Анатолий Калистратович КАСЬЯНОВА**, Ильинка лесничествин лесничине, вăрман хуçалăхĕнче нумай çул тухăçлă вăй хунăшăн тата обществăлла активлă ĕçшĕн.

**Елена Гавриловна ПРОКОПЬЕВАНА**, Çатракасси шкулĕнчи учителе, çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парас ĕçри çитĕнӳсемшĕн.

**Алексей Серафимович ФЕДОРОВА**, районти сĕт завочĕн водительне, нумай çул тухăçлă вăй хунăшăн тата обществăлла активлă ĕçшĕн.

## Раççейре

# Декабрьтен пенси ӳсет

РФ Президенчĕ В.В. Путин ĕç пенсийĕн база пайне декабрĕн 1-мĕшĕнчен 300 тенкĕ ӳстересси çинчен калакан федераллă саккуна алă пуснă. Çак саккунпах пенсин тĕп пайне 2008 çулхи август уйăхĕнче те пысăклатма палăртнă.

Декабрь уйăхĕнче мĕн пур ĕç пенсийĕсем хăпараççĕ: ватлăхпа параканни те, инвалида тухнипе, тăрантаракана çухатнипе параканнисем те.

Çапла вара 2007 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пенсин тĕп пайĕ 300 тенкĕ чухлĕ ӳсет, пĕтĕмĕшле уйăхри виçи 1560 тенкĕпе танлашать.

2008 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен тĕп пай тата 15 процент чухлĕ (234 тенкĕ) пысăкланать, уйăхри виçе 1794 тенкĕ пулать.

80 çул урлă каçнисен е инвалидсен (3 степень) ватлăхпа паракан ĕç пенсийĕн тĕп пайĕ икĕ хут пысăкланать, декабрĕн 1-мĕшĕнчен 3120 тенке çитет. 2008 çулхи августран – 3588 тенкĕ.

2 степене тивĕçнĕ инвалидсен çапла пулать: кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен – 1560 тенкĕ, çитес çулхи августран – 1794 тенкĕ.

1 степене тивĕçнĕ инвалидсен: кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен – 780 тенкĕ, çитес çулхи августран – 897 тенкĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн пенсин тĕп пайне икĕ хут ӳстерсе тӳлеççĕ, енчен те пенсионерăн тăрантарса усрамалли çын пур пулсан. Тăрантаракана çухатнăран паракан пенси те çаплах ӳсет.

Икĕ пенси илме право пур граждансен те (тĕслĕхрен, вăрçă инваличĕсем) икĕ пенсийĕ те пысăкланать.

Çавăн пекех кăçалхи декабрьтен те тата çитес çулхи августран та пенсин база пайĕпе çыхăннă тĕрлĕ тӳлевсем те хăпараççĕ. Çапла вара патшалăх пенсийĕ çумне уйăхсерен хушса тӳлесси те ӳсет.

Монетизаци çинчен калакан 122 номерлĕ федераллă саккунпа палăртнă уйăхсерен укçан тӳлекен тӳлевсем те пысăкланаççĕ. 2008 çулхи августран çак тӳлевсем 7 процент хăпараççĕ.

## Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне

# Пĕрле çанă тавăрса ĕçлемелле. Урăхла çул çук

***Вăхăт сисĕнмесĕр хăвăрт иртет. Кăçалхи 10 уйăх та хыçа юлчĕ. Шутласассăн, шăпах хамăр кăçал мĕнле ĕçленине малтанласа пĕтĕмлетме вăхăт. Туса çитереймен ĕçсене пурнăçламалăх кăштах вăхăчĕ те пур. Районăн ку таранчченхи утăмĕсем çинчен, вăхăта сая ямасăр пурнăçламалли ĕçсем çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнчен, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕнчен А.Н. ИВАНОВРАН.***

**– Альберт Николаевич, районăн кăçалхи экономика аталанăвне мĕнле хак паратăр?**

– Кăçалхи 10 уйăхра ял хуçалăх тата промышленность предприятийĕсенче пĕтĕмпе 847 миллион тенкĕлĕх продукци туса илсе реализациленĕ. Иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, ку кăтарту 1,5 хут пысăкрах. Хаксем улшăнсах тăнине шута илсен те, çак сумма пирĕн районти экономика аталанăвĕ, производство вырăнтан тапраннине, паян район тĕрĕс çулпа кайнине кăтартса парать.

Промышленность предприятийĕсенчен, тĕслĕхрен, "Муркашри кирпĕч завочĕ" акционерлă уçă общество кăçал 45,3 миллион тенкĕлĕх продукци кăларса сутрĕ. Продукци хамăр республикăран пуçласа Мускав таранах сутăнни хăех кунта пахалăхлă продукци кăларнине çирĕплетсе парать. "Сеспель" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра та ӳсĕм 2 хута яхăн пысăкрах. Пурĕ 389,4 миллион тенкĕлĕх продукци кăларса реализациленĕ. Вĕсен продукцине хамăр çĕршывра çеç мар, ют çĕршывсенче те хапăл туса кĕтеççĕ. Ку мĕн çинчен калать? Ертӳçĕсем ĕçе йĕркелеме пĕлни, унта вăй хуракансем яваплăха туйса ĕçлени пирки. Асăннă предприятисенче производствăна эффективлă аталантарса пыни çинчен. Çавăн пекех "Моргауши – Хлеб", "Сундырь –Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ.

Анчах та паян малалла хытах туртăнмалли предприятисем те пур-ха. Производство валли лаптăкĕсем те çителĕклĕ, эффективлă ĕçлемелли майсем те пур, анчах ниепле те кирлĕ пек ĕçлесе каяймаççĕ. Тĕслĕхрен, "Моргаушавтотехсервис" акционерлă уçă обществăн тата та лайăхрах ĕçлеме майсем пур. Вĕсене шырамалла. "Моргаушагропромснаб" МП хăйĕн тивĕçне çителĕклĕ таран туса пырайманни те пăшăрхантарать. Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче те депутатсем çак ыйту çинче чарăнчĕç. "Моргаушагропромхими" акционерлă уçă общество алран алла куçса пынипе хăйĕн малтанхи хăватне те, çĕнсе илнĕ чапне те палăрмаллах çухатрĕ. 3,8 миллион ытларахлăх çеç пурнăçларĕ ĕçсене. Асăннă предприятисем тата ыттисем те хăйсен ĕçне тата лайăхрах йĕркелесен, хăйсен вăй-хăватне ӳстерсен, лару-тăру татах та лайăхланĕ, район экономики татах та çирĕпленĕ. Паянхи пурнăç вăл хăвăрт улшăнать. Çавăнпа та ертӳçĕсен кирлĕ те тĕрĕс йышăнусене хăвăрт туни кирлĕ.

Манăн тата çакна палăртсах калас килет. Район экономикинче пысăк предприятисемпе пĕрле пĕчĕк предприятисен, уйрăм предпринимательсен тӳпи те сахал мар. Тĕслĕхрен, А.В. Малышев, А.Н. Вязов, В.И. Иванов, Н.Л. Царев, В.Г. Васильев, А.С. Портнов ертсе пыракан пĕчĕк предприятисем те йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Суту-илӳ сферинче Т.М. Бардасова, Л.В. Николаева ертсе пыракан предприятисем ăнăçлă аталанаççĕ. Асăннă предприятисенче пĕр 100 çын кăна ĕçлемест. Çакăн пек конкуренцие чăтма пултаракан продукцие пысăк калăпăшпа кăларакан пĕчĕк предприятисен ĕçне аталантарма пулăшмалла пирĕн.

Халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтерессине илес пулсан та, кăтарту пĕлтĕрхинчен пысăк. Пурĕ таварçаврăнăшне 350 миллион тенкĕлĕх ытла пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ. Республика шайĕнче те, Раççей шайĕнче те тивĕçлипех курăнать вĕсен ĕçĕ.

**– Ял хуçалăхĕнче паян лару-тăру çăмăл маррине паян кашниех лайăх ăнланать. Ку вăл пур çĕрте те çакăн пек. Районăн çак отраслĕн кăтартăвĕсемпе малашлăхĕ мĕнле?**

– Промышленность продукцине нумай кăларатпăр пулин те, Муркаш районĕ ял хуçалăх районĕ шутланать. Эпир çĕр çинче ĕçлетпĕр. Тыр-пул кашни гектартан вăтамран районĕпе 18 центнера яхăн пухса кĕртрĕмĕр, пĕтĕмпе 20 пин тонна. Ку пирĕн районшăн çителĕксĕр. Паллах, ял хуçалăх отраслĕн кăтартăвĕ çут çанталăкран та килет. Кăна та шута илмелле. Анчах та хамăртан та нумай килет. Ĕçе пĕлсе тĕрĕс йĕркеленĕ пулсан, технологие пăхăннă пулсан, пĕтĕмлетӳ лайăхрах та пулнă пулĕччĕ. Пĕр пек условисенчех Ильич яч. хис., "Восток", "Герой", Чапаев яч.хис. хуçалăхсем тухăçа 20 центнертан та чылай ирттерчĕç. Çурхи культурăсен тухăçĕ пĕчĕк пулни çакăн пек витĕм кӳчĕ пĕтĕмĕшле кăтарту çине.

Ку мĕн çинчен калать-ха? Тыр-пул тухăçĕ пирки çуркунне çеç шутламалла марри пирки. Кĕрхи культурăсене ытларах акса хăвармалли çинчен. "Ударник", "Свобода", "Герой", Ильич яч. хис. хуçалăхсенче кĕрхи культурăсен тухăçĕ самай пысăк пулчĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Юбилей

# Саламлатпăр



Пирĕн хаклăран та хаклă юратнă çыннăмăрсене – аттепе аннене, асаннепе асаттене, аппапа йыснана, хĕрĕмпе кĕрĕве – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Анфиса Михайловнапа Валериян Иванович НАУМОВСЕНЕ** 55 çул тултарнă ятпа тата 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра иксĕлми телей, юрату тата нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Сирĕн ырă кăмăлушăн, чун-чĕре ăшшишĕн тав тăватпăр, сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, хĕрĕ, тăватă ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, кăмăллă аттене тата кукаçине – Рыккакасси ялĕнче пурăнакан **Михаил Алексеевич Алексеева** 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем тата ултă мăнукĕ.**